25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943. АПРЕЛЬ 13 ЫТЛАРИКУН 79(6316) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче фронтсенче палла улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 9-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груз-сем турттарса пыракан 30 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтернĕ тата тăшманăн чугун-çул составне аркатса тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пĕр чаçăн подразделенийĕсем тăшман атакине сирсе пăрахнă. Артиллерипе минометсенчен персе нимĕçсен 3 танкне, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 орудине пĕтерсе тăкнă тата артиллерин 4 батарейине пусарнă. Çапăçу хирĕнче 200 ытла тăшман вилли вырт-са юлнă. Юлашки кунсенче снайпер Сухарев 21 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, снайпер Минзарев—15 нимĕçе, снайпер Почкунов 11 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем тăшман позицийĕсем синелле персе тăрса артиллерин 10 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

Гварди кĕçĕн-лейтенанчĕ Цицарев командир пулса ертсе пыракан разведчиксен групи тăшман тылне кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем оборона ĕçне тăвакан темиçе вуншар нимĕç салтакне курнă. Гвардеец-разведчиксем тăшмана сасартăк тапăннă та 40 нимĕç салтакне вĕлернĕ, вара пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем тăшманăн 8 дзотне аркатнă, артиллерипе минометсен 4 батарейине пусарнă. Нимĕçсен разведка тăвакан группи, минометсенчен персе тăнипе хӳтĕленсе пирĕн оборона хушшине кĕрсе кайма хăтланнă. Гварди лейтенанчĕ Шахов ертсе пыракан боецсем нимĕçсене малтан шала кĕртсе янă та унтан сасартăк вĕсене тылран та, флангсенчен те атакăланă. Темиçе вуншар гитлеровеца вĕлернĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Кубань çинче пирĕн войскăсем артиллерирен персе тăнă тата разведка туса пынă. Пĕр участокра нимĕç пехотин батальонĕ пирĕн боевой ретсем хушшине шăтарса кĕме хăтланнă. Пĕр чаçăн подразделенийĕсем нимĕçсене çывăха пыма панă та ушкăнпа харăс пеме пуçланă. Çапăçу хирĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен 100 ытла виллине хăварса гитлеровецсем каялла чакнă.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 3 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ Ленинград облаçĕнчи районсенче çав тери тискер ĕçсем туни çинчен Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерӳ илнĕ. Нимĕç командованийĕ Дедович, Дно, Порхов, Славково, Псков. Остров тата Сошихин районĕсене карательнăй отрядсем илсе пырса тултарнă. Нимĕçсен карательнăй отрячĕсем (вĕсене бандитсемпе пуçкасакансене пухса тунă) офицерсем ертсе пынипе совет ялĕсене çĕрпе танлаштараççĕ, юнпа шăвараççĕ. Халăх пурăнакан пунктсене пырса кĕрсе, гитлеровецсем хĕрарăмсене, ачасемпе стариксене пĕтĕмпех вĕлерсе пĕтереççĕ, ĕçлеме пултаракан халăха Германие каторгăна е оборона рубежĕсем тунă çĕре хăваласа каяççĕ, халăхăн пурлăхне пĕр çип татки хăвармиччен туртса илеççĕ. Çав районсенчен тарса тухма пултарнă совет гражданĕсем çапла каласа панă: «Порхов районĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Дубье, Ровняк, Буяницы, Тосницы, Оклад, Плосково, Погорье тата ытти ялсене те çунтарса янă. Палачсем ял çыннисен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă, ыттисене Старая Русса районне оборона строительствине илсе кайнă. Нимĕçсем çавăн пекех Палицы ялне çунтарса янă. Çав ялти 90 çынна гитлеровецсем пуçтарнă та вĕсене Германие ярасси çинчен пĕлтернĕ. Хресченсем каторгăна каясшăн пулман. Фашистла ирсĕрсем хресченсене тискеррĕн хĕнесе пĕтернĕ те пĕр сарая хупса хурса çунтарса янă. Бродовичи ялĕнче нимĕç карателĕсем ĕненекенсенчен мăшкăлланă. Служба пынă вăхăтра гитлеровецсем чиркĕве çĕмĕрсе кĕнĕ те, унта пулнă çынсенчен пĕрне те киле кĕрсе тухма ирĕк памасăрах, ирĕксĕр ĕçлеттерме хăваласа кайнă. Хăшпĕр çынсем çакăн пек нихăçан илтмен тискерлĕхе хирĕç протестлеме хăтланнă. Нимĕçсем вĕсене çавăнтах, чиркӳ патĕнчех персе пăрахнă».

Çав районсенчен тарса тухнă çынсем каланă тăрăх, совет гражданĕсене массăллăн вĕлерессе тата ялсене пĕтерсе тăкасси нимĕç войскисен çурçĕр-хĕвелтухăç тылне хуралламан группировкин командующин генерал-майор Шпейманăн приказĕ тăрăх пулса пырать. Çак палач хăйĕн ыттисене мирлĕ совет ялĕсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкса унта пурăнакансене вĕлерме е чуралăха хăваласа кайма хушнă.

Генерал-майор чинне илнĕ гитлерла бандита пĕтĕм хăйĕн шайкипе пĕрле тивĕçлĕ тавăрмалли кун инçе мар ĕнтĕ.

Апрелĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 11-мĕшĕнче фронтсенче палла улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, апрелĕн 3-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромĕсем çинче нимĕçсен 117 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 48 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 10-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕтсе янă, артиллерипе минометсен 5 батарейине пусарнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра хаяр çапăçусем пулса пынă. Иртнĕ çапăçусенче йывăр çухатусем тӳснĕ пулин те, тăшман пирĕн войскăсене хĕсме хăтланать. Паян ирхине нимĕçсем çапăçăва пĕр полк пехота, 15 танк тата хăй тĕллĕн çӳрекен темиçе орудие кĕртнĕ. Çав участокра гитлеровецсен вăйĕ ытларах пулнипе вĕсем пĕрре çапсах пирĕн позицисене тытса илесшĕн пулнă. Совет боецĕсем хаяр çапăçура тăшмана пысăк сиен кӳрсе ăна каялла чакарнă. Нимĕçсен ун хыççăн пулса пынă пур атакисем те ăнăçсăр вĕçленнĕ. Çав çапăçура нимĕçсен 7 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 2 орудине пĕтернĕ. Вилнисене кăна шутласан та тăшманăн 300 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче уйрăм участоксенче пысăк мар разведка отрячĕсем кĕрешнĕ. Пăшалсемпе пулеметсенчен тата минометсенчен персе тăрса нимĕç пехотин пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр соединени артиллерисчĕсем тăшман артиллерин 5 батарейине пусарнă.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн разведчиксен группи, нимĕçсен хуралне пĕтерсе тăкса, тăшмана сасартăк атакăланă та кĕске çапăçу пулнă хыççăн вăйлăн тĕреклетнĕ высотана йышăнса илнĕ. Штык вĕççĕн çапăçса нимĕç гранизонне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра разведчиксен отрячĕ тăшман тăракан вырăна пырса кĕнĕ, противотанковăй гранатăсем ывăтса, тăшман дзотне сирпĕтсе янă. Разведчиксем гитлеровецсен хĕçпăшалне тытса илсе, хăйсен чаçне чиперех таврăннă.

* * *

Кубань çинче пĕр чаçăн артиллерисчĕсем тăшманăн 12 пулеметне, 3 минометне тата орудине пĕтерсе тăкнă. тăшман артиллерин 2 батарейине пусарнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 8 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Севск районĕнче Голосов юлташ командир пулса ертсе пыракан часăн снайперĕсем 10 кун хушшинче 220 нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тĕплĕн разведка тунă хыççăн Днепр çинчи пĕр пристань патĕнче нимĕçсен пысăк отрядне сасартăк тапăннă. Хаяр çапăçура совет патриочĕсем гитлеровецсене пысăк çухату кӳнĕ. Нимĕçсен 200 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. 2 оруди, 8 пулемет, автоматсемпе винтовкăсем нумай, 650 снаряд, 15.000 патрон, гранатăсем, минăсем тата ытти боеприпассене те тытса илнĕ. Партизансем Днепра 3 пароход, 4 катер, моторнăй лодка тата тăшманăн тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ 5 баржине путарнă.

* * *

Нимĕçсен 252-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă унтер офицер Карл М. çапла каласа панă: «Иртнĕ çуллапа кĕркунне Орел—Брянск çулĕ çинче нимĕç салтакĕсем ларса пыракан нумай поезда крушени тунă е рельссенчен кăларса янă. Инсетри тылра та партизансем поездсене ӳпĕнтере-ӳпĕнтере яраççĕ. Декабрь уйăхĕнче эпĕ каякан поезд Сарны станци çывăхĕнче ӳпĕнсе кайрĕ. Брест-Литовск районĕнче пĕр поезд мина çине пулса сирпĕнсе кайнă. Çав вăхăтра ун çине хирĕç пыракан эшелон пырса çапăннă. Крушени пулнипе 66 салтакпа офицер пĕтнĕ. Чугунçул çитти служащи мана çапла каларĕ: вăйлăн хурал тăнă пулин те, партизансем Волковыскпа Минск хушшинчи чугунçул тăрăх поездсем çӳрессине пĕрмаях чараççĕ. Вăлах мана Пинск çывăхĕнче партизансем нимĕç салтакĕсем ларса пыракан çар эшелонне сирпĕтни çинчен каласа пачĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Белоруссин вăхăтлăха оккупациленĕ районĕнчи больницăсемпе лечебницăсене пурне те çаратса е аркатса пĕтернĕ. Вырăнти халăха медицина енчен ниепле пулăшу та памаççĕ. Хăшпĕр хуласемпе ялсенче çавăн пирки тиф чирĕ тата ытти чирсем питĕ сарăлнă. Минск облаçĕнчи Слуцк хулинче гитлерла çынçиенсем тифпа чирленĕ çынсене çунтарса янă.

Совет самолечĕсем Кенигсберга тапăнни

Апрелĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле совет самолечĕсем Кенигсберг çине вĕçсе пырса хулари çарпа хуçалăх обьекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă.

Генерал-лейтенант Н. С. Хрущев юлташа иккĕмĕш степеньлĕ Суворов орденне панă

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ апрелĕн 10-мĕшĕнче Кремльте генерал-лейтенант Н. С. Хрущев юлташа иккĕмĕш степеньлĕ Суворов орденне панă. Н. С. Хрущев юлташа ăна нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç тунă боевой операцисене хăюллăн тата ăнăçлăн ертсе пынăшăн тата çав операцисем ăнăçлă пулнăшăн наградăланă. (ТАСС).

Британи çар миссийĕн пуçлăхне Мартель генерал-лейтенанта И. В. Сталин юлташ йышăнни

Апрелĕн 12-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕпе В. М. Молотов юлташпа пĕрле, Британин ССР Союзĕнчи çар миссийĕн пуçлăхне Г. Мартель генерал-лейтенанта йышăннă. Йышăнура Великобритани Посолĕ А. К. Керр господин пулнă,

Ӳкерчĕк çинче: Чаплă стахановка К. П. Порфирьева юлташ. Вăл Канаш районĕнчи Хĕрлĕ Çар ячĕпе тăракан колхозра выльăх-чĕрлĕх фермин заведующийĕ пулса ĕçлет.

Р. Ройзен фотоӳкерчĕкĕ.

Пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ капитан Ф. Н. Орлов кăçал республикăна килнĕ чухне ăна валли боевой самолет илме 100 пин тенкĕ укçа хывнă мухтавлă колхозник-патриотпа Улатăр районĕнчи «Красный Луч» колхоз членĕпе А. М. Сарсков юлташпа тĕл пулчĕ.

Ӳкерчĕк çинче: (сулахайран) А. М. Сарсков, унăн хĕрĕ Нина тата Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов.

С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

Шупашкар хулинчи предприятисенчи стахановецсен канашлăвĕ

Апрелĕн 10-мĕшĕнче ВКП(б) Шупашкар горкомĕ хулари предприятисенчи стахановецсен канашлăвне ирттерчĕ.

Советсен Çуртĕнчи ларусен залне предприятисемпе артельсенчи чи лайăх çынсем — стахановецсемпе стахановкăсем пуханнă. Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту мĕнле пыни çинчен ВКП(б) Шупашкар горкомĕн промышленность енĕпе ĕçлекен секретарĕ Мойсик юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн пренисем пуçланчĕç. Стахановецсем пĕрин хыççăн тепри трибуна çине тухса хăйсен çитĕнĕвĕсем çинчен каласа пачĕç, ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕç, чăрмавсене пĕтермелли майсене уçса пачĕç.

Пренире пурĕ 14 çын тухса каларĕç. Вĕсем хушшинче — табак фабрикинчи стахановка Монахова, завком председателĕ Малай, стахановецсем Живулин, Генкина, Литвинский, Дворянинов, Давыдов юлташсем, водосветри стахановкăсем Новикова, Чуркина юлташсем, чăлха фабрикинчи стахановка Голинская юлташ т. ыт. те.

Канашлу хупăнас умĕн ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларĕ.

Фронтовиксен çырăвĕсем

1. РЕСПУБЛИКĂРИ ХĔРСЕНЕ

Хаклă юлташсем! Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене çапса аркатса хамăрăн çĕршывран пĕтĕмпех хăваласа кăларас ĕçе тӳрремĕнех хутшăнас тесе, эпир хамăрăн ирĕкпе Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн ретне тăтăмăр.

Хамăрăн чаçра Чăваш республикинчи хĕрсен пĕррремĕш представителĕсем пулса тăрса, эпир хамăрăн хĕçпăшала хăвăртрах вĕренсе çитессишĕн пĕтĕм вăя хурса вĕренетпĕр. Эпир лайăх стрелоксем, минометчиксемпе пулеметчиксем, артиллеристсем, связистсемпе снайперсем пулма хатĕрленетпĕр. Эпир, чăваш халăхĕн паттăр ывăлĕсемпе алла-аллăн тăрса, хамăрăн тăван çĕршывăмăра хӳтĕлĕпĕр.

Эпир çар ĕçне пĕтĕм вăя хурса вĕренни сая каймасть. Пирĕн мухтавлă хĕрсенчен чылайĕшĕсем боевой тата политикăллă вĕренӳре отличниксем пулса тăчĕç. Вĕсенчен уйрăмах Ятрушева, Михайлова, Воронцова, Николаева, Сергеева, Смирнова, Киргизова, Ильина тата ытти юлташсене те палăртма пулать. Хĕрсенчен Хĕрлĕ Çарăн кĕçĕн командирĕ ятне илнĕ юлташсем те сахал мар.

Вырăс чĕлхине начар пĕлекен боецсене отличниксем куллен пулăшса тăраççĕ. Подразделенисенче вырăс чĕлхине вĕренмелли кружоксем организациленĕ. Çав кружоксенче вĕренсе пур боецсем те çар ĕçĕнче уйрăмах кирлĕ пулса тăракан вырăс чĕлхине лайăх вĕренсе çитеççĕ.

Хаклă тусăмăрсем! Çĕнтерӳ хăй тĕллĕн пулмасть. Тăшмана пуçĕпех аркатса тăкас тесен, сирĕнтен кашни вăя хĕрхенмесĕр ĕçлени, фронта мĕнле те пулин ытларах продукци парса тăни кирлĕ.

Чăваш республикинчи мĕнпур хĕрарăмсене эпир çапла чĕнсе калатпăр: вырăс чĕлхине вĕренĕр, çар ĕçне вĕренсе алла илĕр, кирек мĕнле вăхăтра та Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕрленĕр. Пирĕн чаçри Чăваш республикинчен килнĕ хĕрсем пурте Сталин юлташăн приказне пурнăça кĕртĕç тесе, хăйсен хĕçпăшалне тĕплĕн вĕренсе алла илĕç тесе, шантарса сăмах паратпăр.

ВЛКСМ Чăваш обкомĕнчен эпир пирĕн пата чăваш чĕлхипе çырнă çар учебникĕсемпе литература, вырăс чĕлхине вĕренмелли учебниксем ярса тăма ыйтатпăр. Çавăн пекех тата пирĕн «Чăваш Коммуни» хаçата та тăтăшах илсе тăрас килет. Чăваш республикинчен килнĕ хĕрбоецсенчен Сире пурне те хĕрӳллĕ салам

Боецсем хушнипе
Ятрушева, Киргизова, Воронцова.

Пирĕн адрес: Мускав облаçĕнчи Серпухов хули, 231 №-лĕ часть, политотдел.

2. АМĂШĔ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУ

Комсомолăн пĕр чаçри организацийĕ Первомайски районри Кĕçĕн Атăкри «Красноармеец» колхозăн колхозницине Александра Петровна Чегановăна нумаях пулмасть унăн ывăлĕн фронтри паттăр ĕçĕсем çинчен çырса пĕлтернĕ, амăшне çавăн пек паттăр ывăл çитĕнтернĕшĕн тав тунă. Аяларахра çав çырăва пичетлетпĕр:

«Сывă-и, хаклă Александра Петровна!

Фронтран Сире хĕрӳллĕ салам яратпăр тата ырă сывлăх сунатпăр.

Ку çырăва Сирĕн ывăлăр Василий Афанасьевич тăракан чаçри комсомол организацийĕ çырать.

Хаклă аннемĕр! Эпир çулталăк çурă ĕнтĕ хамăрăн тăван çĕршыва хӳтĕленĕ çĕрте Сирĕн ывăлăрпа пĕрле пурăнатпăр. Василий Чеганов нимĕç ирсĕрĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче хăй хăюллă та тавçăруллă, дисциплинăллă боец пулнине кăтартса пачĕ. Вăл çапăçура яланах лăпкă тата шиксĕр пулнипе мĕнпур юлташсене хавхалантарса пырать. Комсомолец пулса тăрса, Сирĕн ывăлăр ыттисене пример кăтартать. Тăшмана хирĕç вăл чăн-чăн комсомолец пек кĕрешет, нихăçан та хăрама, ывăнма пĕлмест.

Çак çырупа эпир Сире çавăн пек паттăр ывăл пăхса çитĕнтернĕшĕн пĕтĕм чун-чĕререн комсомолецла тав тăватпăр.

Хаклă Александра Петровна! Çапăçура паттăрлăх кăтартнă Сирĕн ывăлăрпа мухтанатпăр. Çавăн пек паттăр çынсемпе пĕтĕм çĕршыв мухтанать.

Мĕнпур вăя хурса çапăçса эпир ылханлă тăшмана çапса аркатăпăр. Эсир те тылра хастарлăн ĕçлĕр. Вара пирĕн çĕнтерӳ уявĕ çитĕ, эпир, çапăçу хирĕнчен таврăнса, иртнĕ йывăр та хĕрӳллĕ кунсем çинчен шăкăлтатса калаçса ларăпăр.

Салампа
Комсомол организацийĕн представителĕсем — комсомол организацийĕн секретарĕ **Серенко**, ВЛКСМ организаци президиумĕн членĕсем — **Гитухов, Артемьев, Шутов, Руденко**».

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ фронтран таврăнчĕ

Кăçалхи апрелĕн 10-мĕшĕнче Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ фронтран таврăнчĕ. Эпир отечественнăй вăрçăн икĕ фронтĕнче—пĕтĕмпе икĕ уйăх хушши пултăмăр.

Çав вăхăт хушшинче Действующи çарăн чаçĕсенче 120 ытла концерт панă. Çав концертсене пĕтĕмпе 80.000 çынна яхăн итленĕ.

Пире çавăн пек пархатарлă та хисеплĕ ĕç тивнишĕн эпир питех те савăнатпăр. Мĕншĕн тесен пире итлекенсем хамăрăн геройла Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем тата политработникĕсем пулчĕç. Вĕсем Октябрьти Социализмлă Аслă революцин çĕнтерĕвĕсене кăкăрпа тăрса хӳтĕлеççĕ. Пирĕн юрăсем те вĕсен геройла кĕрешĕвĕпе хавхаланса янăрарĕç.

Эпир хамăра çавăн пек пысăк та хисеплĕ ĕçе хушса янă чăваш халăхĕ умĕнчи ответлăха туйса ĕçлерĕмĕр. Тупăсем кĕрлесе тăнă çĕре, снарядсем шартлатса çурăлнă çĕре эпир чăваш халăх искусствин чи лайăх юрри-ташшисене, çавăн пекех вырăс халăхĕпе ытти халăхсен юрри-ташшисене те боецсемпе командирсем патне, малти позицисене, илсе çитертĕмĕр. Эпир ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕмĕр. Час-часах пире, 6—8 километрлă походсем тунă хыççăн, йывăр условисенче. кунне 3—4-шар концерт пама лекрĕ. Пире пур çĕрте те чĕререн кăмăлласа ăшшăн кĕтсе илчĕç. Пирĕн концертсем хавхаланулăн пулса пычĕç. Вĕсене чăвашсем те, вырăссем те, украинецсемпе белоруссем те тата ытти мĕнпур халăхсен ывăлĕсем те пĕр пекех кăмăлласа итлерĕç.

Эпир ăçта пулнă, çавăнта пур çĕрте те хамăрăн тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем пиртен чăваш халăхне салам калама ыйтрĕç, пире концертсемшĕн тав турĕç. Сирĕн концертсем нимĕç ирсĕрĕсене татах та хаяррăнрах аркатма, çапла вара татăклă çĕнтерӳ сехетне çывхартма хавхалантараççĕ, терĕç пире боецсемпе командирсем.

Нумаях пулмасть фашистсем хуçаланнă вырăнсенче пулса эпир татах та тепĕр хут çакна курса ĕнентĕмĕр. XX-мĕш ĕмĕрти варварсем—çынçиенсем хăйсем ăçта пулнă, çавăнта пур çĕрте те пирĕн хуласемпе ялсене аркатаççĕ, пирĕн историллĕ тата культурăллă пуянлăхсене çаратаççĕ. пирĕн айăпсăр совет çыннисене — ватă çынсемпе ачасене вĕлереççĕ, хĕрарăмсенчен ирсĕррĕн мăшкăллаççĕ.

Фашистсен юнлă йĕрĕсене хамăр куçпа курни пирĕн хаярлăха, курайманлăха татах та ытларах ӳстерчĕ. Хамăра шанса панă ĕçре пирĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлес, искусство хăвачĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене татах та паттăртарах кĕрешĕве мобилизацилеме пулăшас кăмăл çĕкленчĕ.

Пирĕн пысăк мар ĕçе Н-ски ударнăй армин çар совечĕ хăйĕн приказĕнче пысăка хурса хакларĕ; ансамблĕн артисчĕсене пурне те уйрăмшарăн тав турĕ. Çавăн пекех хамăр пулнă ытти чаçсене те пирĕн ĕçе кăмăлтан хакласа тав турĕç.

Партипе правительство чĕнсен, эпир татах фронта тухса кайма хатĕр тăратпăр.

Ансамбльри артистсен коллективĕ хушнипе:

Ансамблĕн художество руководителĕ, фронтовой бригадăн начальникĕ композитор
Ф. ЛУКИН,

Местком председаделĕ, бригада начальникĕн заместителĕ композитор
Г. ЛЕБЕДЕВ.

Эмел кĕленчисем пухаççĕ

Колхозниксемпе колхозницăсене медицина енчен пулăшу пама кашни колхозрах аптечка кирлĕ. Колхозсенче аптечкăсем тăвас ĕçе сăмăллатас тĕлĕшпе Сĕнтĕр районĕнчи пионерсем, шкулта вĕренекен ачасем аптекăна эмел кĕленчисем пухса пыма пуçларĕç. Вĕсем кĕске вăхăтрах 3.040 кĕленче пухса районри аптекăна леçсе пачĕç. Кĕленчесем пухасси халĕ те пырать-ха.

Çак ĕçе уйрăмах Пушкăртри тулли мар вăтам шкулта вĕренекен ачасем лайăх туса пыраççĕ. Вĕсем кĕске вăхăтрах аптекăна 880 кĕленче пухса пачĕç.

С. Давыдова,
ВЛКСМ Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ.

Колхоз суракине тухма хатĕр тăрать

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. («Хамăр корр.»). Колхозниксемпе колхозницăсем акана тухмалли вăхăта кĕтсе тăраççĕ. Вăрманкасри «Сила» колхоз çуркуннехи ĕçсен планне туса пухура çирĕплетрĕ.

Кашни йышши тырра тата пахчаçимĕçсене гектартан мĕн чухлĕ туса илмеллине палăртнă. Производствăллă бригадăсене çирĕплетнĕ. Уйрăм культурăсем тăрăх ĕçлекен звеносем туса хунă. Кăçал колхозра пурĕ 7 звено. Кок-сагыз тăвас тĕлĕшпе çеç 3 звено ĕçлемелле, вĕсене М. Ильина, Ф. Митрофанова, Е. Матвеева юлташсем ертсе пыраççĕ. Халĕ ку звеносем ĕçе тытăннă, акмалли çĕр лаптăкне уйăрса илнĕ, удобренисем хатĕрлесе çитернĕ. Колхоз правленийĕ бригадăсемпе звеносене çĕрлаптăкĕсем уйăрса çирĕплетсе панă, туртăм вăйне вырнаçтарса тухнă.

Çуракине колхозăн ĕç планĕ тăрăх кашни лашапа 4,70 гектар ĕçлемелле. Çапла вара 41 лашапа ĕçлесе колхоз çуракине 8—9 кунта вĕçлемелле. Лашасем тĕреклĕ. Вĕсем халь канаççĕ. Çураки вăхăтĕнче çитерме 92,78 центнер посыпка, 55 центнер сĕлĕ уйăрнă.

Вăйлă тырпул туса илесси лайăх вăрлăх акса хăварнинчен килнине колхозниксем лайăх ăнланнă. Вăрлăх хатĕрлессишĕн вĕсем çине тăрсах тăрăшрĕç, тимлĕн тасатрĕç, пахалăхне тĕрĕслесе пăхрĕç, çураки пуçланиччен лайăх пăхса усрама пĕтĕм вăрлăха акт тăрăх кладовщика аллине пачĕç.

Пур тырăсене те колхоз кăçал имçамсене сиплесе акать. Сакна тума кирлĕ имçамсене çитерĕклĕ хатĕрленĕ. Тата чылай тырăсене яровизациелесе акать. Яровизацилемелли инвентарĕ тата пулĕм хатĕр.

С. Шадин.

Çуракинче вăкăрсем те ĕçре пулаççĕ

ИШЛЕИ. Тăрăн ялсоветĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхоз туртăм вăйне ÿстерес тĕлĕшпе кăçал вăкăрсене те ĕçе вĕрентнĕ. Колхозник Наум Яковлев икĕ çулхи вăкăра кÿлсе çÿреме вĕрентнĕ. Вăл вĕрентнĕ вăкăр лашаран кая мар ĕçлет. Чылай нумай тиенĕ урапана та туртать.

— Ку вăкăрпа суха тума эпĕ хам тухатăп, — тет Яковлев юлташ.

Халĕ П. Димитриев, М. Николаев колхозниксем те пĕрер вăкăра ĕçе вĕрентсе çитерчĕç. Вĕсем вĕрентнĕ вăкăрсем те кÿлнĕ урапана чиперех туртаççĕ. Вĕсемпе чиперех суха тума пулать.

М. Галкина.

Айăплисене ответ тыттармалла

КАЛИНИНО. Лашасемпе усă курас ĕçре хăшпĕр колхозсенче халĕ те йĕркелĕх туман-ха. Ямбахтинори «Партизан» колхоз членĕ А. Сергеев колхоз лашине хĕнесе вĕлернĕ. Çак киревсĕр тĕслĕхрен колхоз правленийĕ çийĕнчех çирĕп вывод тумалла пулнă. Анчах кунта лашасене тăрлавсăр тыткаланипе халĕ те килĕшсе лараççĕ. Колхоз председателĕ Н. Герасимов «сăмахланасран» хăраса нимĕн те шарламасть.

Б. Шориков.

Çамрăк патриотсем

1. ДИРЕКТОР-ФРОНТОВИК

Тăванри туллимар вăтам шкула çар тумне тумланнă çын пырса кĕнĕ. Вĕренекенсем ăна курсанах класселе вырнаçса ларнă.

— Эпир мĕнле вĕреннине тĕреслеме килнĕ, — тенĕ хăшĕсем.

— Фронтран килнĕскер, командир! — тенĕ теприсем.

Чăнах та вăл фронтран килнĕ çын — Петр Антонович Волков пулнă. Отечественнăй аслă вăрçăччен Хутарти вăтам шкулта преподаватель пулса ĕçленĕ. Халĕ вара ăна, фронтран аманса таврăннă хыççăн, Тăванри туллимар вăтам шкула директор пулма янă.

Вĕренекенсем çĕнĕ директора ăшшăн кĕтсе илнĕ. Часах вĕсен хушшинче тачă çыхăну пуçланса кайнă. Петр Антонович ачасене боевой эпизодсем çинчен, Хĕрлĕ Çар воинĕсем гитлерла палачсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыни çинчен каласа панă. Директорăн кашни сăмахĕ вĕренекенсене хумхантарнă, лайăхрах вĕренме хавхалантарнă.

— Сирĕн, — тенĕ директор ачасене, — Хĕрлĕ Çара отлично вĕреннипе, çирĕп дисциплинăллă пулнипе пулăшмалла. Пушă вăхăтра килтисене, колхоза пулăшса тăмалла.

Ачасем директор сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртме сăмах панă.

Унтанпа вăхăт чылай иртнĕ. Вĕренекенсем хăйсен сăмахне çирĕппĕн пурнăçласа пыраççĕ. Халĕ кашни вĕренекен çÿхуннехи пĕлÿ тĕрĕслевĕсене хатĕрленет. Ачасем пурте тепĕр класа куçасшăн кĕрешеççĕ.

Волков юлташ директор пулса ĕçлеме пуçланăранпа шкулта вĕренÿ пахалăхĕпе дисциплина ÿснĕ, çарпа физкультура ĕçĕ те тĕпренех лайăхланчĕ. Ку ĕçе директор хăй тума пырать. Вăл — военрук. Шкулта çарпа физкультура кабинечĕ организациленĕ. Унта вĕренекенсен вăйĕпе хатĕрленĕ винтовка макечĕсем 65, сапер кĕреçисем 65, граната-муляжсем 98 штука пур. Кабинета пур енчен те кирлĕ пек илемлетсе йĕркеленĕ. Çапла физкультура занятийĕсем яланах пысăк интереспа, организованно иртеççĕ.

2. ПЕРЕКЕТЛЕНĔ УКÇАНА — ТАНКСЕМ ТУМА

Çĕршывра танксемпе боевой самолетсем тума укçа пухас ĕç пуçланнă. Çак патриотла пуçарăва Тăван шкулĕнче вĕренекенсем те тулли кăмăлпа кĕтсе илнĕ. Ятарласах пуху пухнă, пионерсен сборĕсем туса ирттернĕ. Кашни вĕренекенех çав хисеплĕ ĕçе активлăн хутшăнассишĕн суннă.

—Тăван аттесемпе пиччесем фашистла çынçиенсене хирĕç паттăррăн çапăçаççĕ. Фронтсенчен савăнтаракан хыпарсем килеççĕ. Анчах эпир хыпарсене илтнипех лăпланса ларма пултараймастпăр, пирĕн хамăрăн укçапа тăван Хĕрлĕ Çара пулăшмалла, — тенĕ пухура пионер Саша Максимов. Вăл çавăнтах танксем тума хăйĕн чылай вăхăт хушши пухса пынă виçĕ пин тенкĕ укçине пама пулнă.

— Сталин аттемĕр чĕнĕвне отлично пурнăçлама эпир яланах хатĕр. Эпĕ танксем тума 1.000 тенкĕ пама пулатăп, — тенĕ 14 çулхи Соня.

Çавăн пек тупа тунă çамрăк патриотсем хăйсен пухăвĕсенче. Тепĕр куннех укçа пухас ĕç пуçланнă. Вĕренекенсем ирхине ирех шкула пынă та пачкăн-пачкăн туса, майлаштарнă укçана уполномоченнăйсене панă. Малтанхи кунах темиçе пин тенкĕ пухăннă. 5—6—7-мĕш классенче вĕренекенсем танксем тума пĕтĕмпе 21 пин тенкĕ укçа пуçтарнă.

Шкулта çак хисеплĕ ĕçе хутшăнмасăр пĕр вĕренекен те юлман.

Танксен колоннине тума учительсем те активлăн хутшăннă. Вĕсенчен танксем тумашкăн виçĕ уйăхри ĕçукçинчен кая пани пĕр çын та çук. Учительсем Виникенти Таргасов, Александра Лаптенкова, Зоя Уголина, Любовь Лаптенкова, Анастасия Петрикеева, Мария Лаптенкова тата Фея Макарова танксен «Народный учитель» колоннине тума 1.500-шер тенкĕ панă, шкул директорĕ Волков юлташ 2 пин тенкĕ хывнă.

3. УРОКСЕМ ХЫÇÇĂН

Колхозсенче хĕрсех ялхуçалăх машинисене, лаша таврашĕсене юсаççĕ, çĕнĕрен тăваççĕ, вăрлăхсем сортласа тасатаççĕ, уя тислĕк кăларассĕ тата вырăнти удобренисем хатĕрлеççĕ. Кашни колхозах кăçал иртнĕ çулхинчен ытларах тырпул туса илессишĕн тăрăшаççĕ.

Çак вĕренекенсем те таврари колхозсене пулăшма пуçлаççĕ. Тăванри шкулта вĕренекенсем кашниех 2—3 витререн кая мар кăшман кĕпĕкне панă, çĕрулми тăррисене 5 килограмран кая мар касса хатĕрлеме обязательство илнĕ.

Урокĕсем пĕтсен шкул ачисем васса колхозсене саланаççĕ. Вĕсем пĕлеççĕ: çураки çывхарса килет, ăна тĕплĕн хатĕрлене ăнăçлăн ирттермелле. 7-мĕш класра вĕренекен Петя Угодин Буденный ячĕпе хисепленекен колхоза 15 пăт кĕл пухрĕ, унпа пĕрле ĕçлекен Ваня Арюхин та 14 пăт пухнă. Вĕсем минераллă удобренисем пухнипе пĕрлех, колхозсене ялхуçалăх инвентарьне юсама пулăшаççĕ. Вĕсемех колхозри пĕр тихана шефа илнĕ, ăна лайăх пăхса çитĕнтереççĕ.

«Вперед» колхоз председателĕ Долгов юлташ вĕренекенсем пирки çапла калать:

— Пысăк пулăшу параççĕ вĕсем пире, хуть те мĕнле ĕç тума хушсан та ÿркенсе тăмаççĕ, — тет.

Çапла хакласçĕ ачасен ĕçне ытти колхозсен председателĕсем те.

Вĕренекенсем уроксем хыççăн шкулти тĕрлĕ кружоксенче ĕçлеме те вăхăт тупаççĕ.

Тăван шкулĕнче вĕренекенсем иртнĕ çулта колхозсенче лайăх ĕçленĕ. Кăçал татах та активлăрах ĕçлеме пулаççĕ. Вĕсем Тăван çĕршывпа Çара лайăх вĕреннипе, колхозсенче тăрăшса ĕçленипе тата ĕçлесе тупнă укçа-тенкĕпе пулăшма тăрăшаççĕ.

Х. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ.

Çĕршыва хÿтĕлекенсен çемьисене пулăшаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри ĕççыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемьисене пулăшас ĕçе пĕр чарăнмасăр туса пыраççĕ.

Вунăкунлăх вăхăтĕнче продовольстви фондне 9 тонна ытла тырă, 35 тонна çĕрулми, 75 килограмм пыл, 250 килограмм сухан, 9 пин тенкĕ ытла укçа пухса хывнă.

Районри партипе совет тата профсоюз организацийĕсем фронтовиксен çемьисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕсленĕ, вĕсем валли 670 кубла метр ытла вутă касса хатĕрленĕ, вăл шутран 230 кубла метрне турттарса панă. Выльăх-чĕрлĕх çук çемьесене икĕ пушмак пăру, 17 сысна çури, 6 путек, 20 чăх, 10 кăчака уйăрса панă. Колхозниксем фронтри юлташсен çемьисене 11 тумтир, 14 мăшăр атă-пушмак, 10 килограмм çăм, 14 мăшăр нускичăлха тата ытти япаласем пухса панă.

«Звезда» колхозри комсомолецсен вăйĕпе çĕвĕ çĕлекен тата атă-пушмак юсакан бригадăсем организациленĕ. Бригадăсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ.

Фронтовиксен çемьисен нушисем çине чунсăрла пăхакан руководительсем те пур-ха. Чăрăшкасси, Шанар колхозĕсенче фронтовиксен семьисене пулăшас енĕпе нимĕнле ĕç те туса ирттермен.

А. Хатаевский.

ФРОНТРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

КĔСКЕ КАЛАВСЕМ

I

Пĕррехинче Гитлер вăрттăн кино курма каять. Шăп кăна хăй сирпĕтсе сăмах каласа тăнине кăтартаççĕ иккен. Германи законĕсем хушнă пек, курма пынисем «фюрер» текенскере ура çине тăрса аллисене кăнтарса саламлаççĕ. Пĕр Гитлер çеç выртан та хускалмасть.

— Тăр, ачамкки, тăр часрах, — тет ăна курма пынисен пĕри. — Эпир те сан пекех шутлатпăр. Анчах та Гитлер пек çынçăнсенĕн, вăр-хурахшăн, урнă йытăшăн камăн концлагĕре лекес килĕ?

II

Берлинри рабочисем хушшинче çакнашкал тупмалли юмах çÿрет:

Гитлер, Геринг, Геббельс самолетпа вĕçсе пыраççĕ. Самолет çĕмĕрĕлет. Пурте ÿксе вилеççĕ.

Кам хăтăлса юлать?

Тупсăмĕ: Германи халăхĕ.

III

Берлинри гестапо (вăрттăн полици), «фюрертан» мăшкăлласа кулакан анекдотсем сарнăшăн тесе, пĕр çынна тĕрмене тытса хупать.

— Фашистсенчен кулакан анекдотсене пурне те каласа пар, вара сана ирĕке кăларăпăр, — теççĕ ăна гестапора.

Тĕрмене лекнĕ çын калама тытăнать. Кунне 16-шар — 20-шер сехет каласа парать. Хăшпĕр чух хăйĕн «ĕç кунне» 22-шер сехете те çитерсе пăхать. Анчах фашистсенчен мăшкăлласа кулакан анекдотсене çаплах çуррин-çуррин-çуррин чĕрĕкне те каламан тет-ха. Пĕтĕмпе калас пулсан, татах 30 çул та виçĕ уйăх ларас пулать, тет тĕрмере.

Ют çĕршывесенче

КУБАРИ СОВЕТ ПОСЛАННИКĔ ЛИТВИНОВ ЮЛТАШ КУБА ПРЕЗИДЕНТНЕ ВЕРИТЕЛЬНĂЙ ГРАМОТĂСЕМ ПАНĂ

ГАВАНА, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Кубăра хăйне совет посланникĕ туса хуракан верительнăй грамотăсене пама Гаванăна Совет Союзĕн США-ри посолĕ Литвинов юлташ пырса çитнĕ. Президент дворецне пырсан Литвинов юлташа хисеплĕ хурал кĕтсе илнĕ. Литвинов юлташ верительнăй грамотăсене Куба президентне Батистăна панă. Грамотăсене панă вăхăтра ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сантовения тата унăн заместителĕ Миранда пулнă. Президент Батиста тата Литвинов юлташ пĕр-пĕрине саламланă.

Президент дворецĕ умне Совет Союзĕн Кубари дипломатиллĕ пĕрремĕш представительне хĕрÿллĕн саламлама халăх нумай пухăннă. Ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви çинче Куба ялавĕпе юнашар совет ялавĕ вĕлкĕшнĕ. Совет Союзĕпе Куба хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем тунине Куба хаçачĕсем пĕр кăмăлпа ырлаççĕ.

СССР-а КАЙНИ СИНЧЕН ЧЕХОСЛОВАКИ ДЕЯТЕЛĔ ЛАУШМАН ДОКЛАД ТУСА ПАНĂ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 6-мĕшĕнче Чехословаки журналисчĕсен митингĕнче Чехословакин государство совечĕн председателĕ Лаушман хăй СССР-а кайса килни çинчен доклад туса панă. Хăйĕн докладĕнче Лаушман совет çыннисен пысăк дисциплини çинчен, çирĕплĕхĕ çинчен, вĕсем çĕнтерессине шанса тăни çинчен, вĕсем Хĕрлĕ Çарпа партизансене юратни çинчен каланă. Партизансене вăл «ССР-ти иккĕмĕш армин паттăрĕсем» тесе хакланă. «Пирĕн шанчăк— СССР çинче», тенĕ Лаушман. СССР-па Чехословаки хушшинчи туслă çыхăнусем çинчен Лаушман ăшă кăмăлпа асăннă. «СССР тĕлĕшпе малашнехине курса тăракан политикăна тытса пынипе эпир хамăра телейлĕ тесе шутламалла. Ыттисем хăйсен чаçĕсене каялла тавăрнă вăхăтра эпир унта хамăрăн нациллĕ чаçсене тăватпăр. СССР вăл Вăтам Европăра Чехословакия паллă вырăн йышăнса тăракан пултăр тесе тăрăшать», тенĕ.

СОВЕТ СУТУ-ИЛÿ КАРАПĔ ТĂШМАНĂН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИПЕ ÇАПĂÇНИ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: США тинĕс-çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн пуçламĕшĕнче Совет Союзĕн пысăк мар суту-илÿ судни Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнче тăшманăн подводнăй лодкипе çапăçнă. Çапăçу çил-тăман вăхăтĕнче пулса иртнĕ. Çил-тăманпа усă курса, подводнăй лодка шыв çийĕпе пынă чухне тапăннă. Карап çинчи сигнальщик подводнăй лодка янă торпеда йĕрне курсан, карап 300 градус пăраннă та, торпеда карапран вунă метртан иртсе кайнă. Виçĕ минута иртсен иккĕмĕш торпеда пăрахнă, карап каллех сасартăк пăраннă. Иккĕмĕш торпеда карап хыçĕпе 15 метртан иртсе кайнă. Çав вăхăтра карап çинчен пулеметсенчен вăйлăн пеме пуçланă. Пульăсем подводнăй лодкăн боевой рубкине тивнипе унта вăйлă взрыв пулнă. Çавăн хыççăн лодка шыв айне аннă, совет карапĕ хăй çулĕпе малалла кайнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕ ĕнер Çурçĕр Франціре паровозсемпе çар объекчĕсене нумай сиен тунă.

«Москито» самолетсем Кельн çывăхĕнчи промышленность районĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Апрелĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин йывăр бомбардировщикĕсем Дуисбург çине тата Рур облаçĕнчи ытти çар объекчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Германин темиçе самолечĕ ĕнер каçхине кăнтăр-хĕвелтухăç Англи сыранĕнчи пĕр пункт çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахни пăртак сиен кÿнĕ, вилнисем те пур.

НИМĔС ЛАВКАСĔСЕМ «ТОТАЛЬНĂЙ МОБИЛИЗАЦИРЕН» ХĂРАСА ÿКНĔ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Кельнише цейтунг» ятлă гитлерла хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «тотальнăй мобилизаци» ирттернĕ май, Германире ушкăнпа тата ваккăн сутакан суту-илÿ предприятийĕсене хупса пыраççĕ. Нимĕç лавкаçĕсем гитлеровецсен çав ĕçĕсенчен хăраса ÿкнĕ. Хаçат каланă тăрăх, çав япала «вĕсене питĕ кÿрентерет». Хаçат лавкаçĕсем жалоба пани усăсăрах пулни çинчен, магазинсене хупнă пирки жалобăсем пама юраманни çинчен асăрхаттарать.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 8-мĕшĕнче Итали войскисен пĕр соединенин командующийĕ генерал Маннерини хăйĕн пĕтĕм штабĕпе пĕрле тыткăна лекнĕ.

Англи, Франци тата Америка чаçĕсем пĕрлешсе, Фондукран çурçĕрпе кăнтăр енчи çÿллĕ вырăнсене йышăнса илмелли операцисем пуçласа янă. 500 çынна ытла тыткăна илнĕ.

Меджес — Эль-Баб тата Мюншар районĕнче малалла куçса пырса, Англи войскисем юлашки 4 кун хушшинче унта 1.000 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем паян ирхине Сфакс хулине йышăнса илнĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, англичансен 8-мĕш армийĕ Тунисра малалла наступлени туса пырать. Сфакса апрелĕн 10-мĕшĕнче ирхине ирех йышăнса илнĕ, çĕрле саккăрмĕш армин малти патрулĕсем çурçĕрелле чылай малалла куçнă. Фондук районĕнче бронетанковăй чаçсем Кайруан патнелле куçса пынă, тăшманăн бронетанковăй вăйĕсем вĕсене хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Çурçĕрте, Меджес—Эль-Баб тата Мюншар районĕнче, Англи войскисем малалла куçса пырса нумай çынна тыткăна илнĕ.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Кайруантан 15 мильăра тăракан союзниксен войскисем Сус патне 43 миля таран çывхарнă. 8-мĕш арми чаçĕсем те Эль-Джем витĕр тухакан çулпала Сус патнелле пыраççĕ. Çапла вара 3 кун хушшинче 8-мĕш армин войскисем 66 миля ытла кайнă. Вăтам Тунисра тĕнĕл держависем хирĕç тăрасси питĕ вăйсăрланса пырать пулас.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: 8-мĕш арми Марет линийĕ çине наступлени пуçласа янă хыççăн 8-мĕш арми апрелĕн 7-мĕшĕнче американецсемпе пĕрлешиччен 20 кун хушшинче союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсем çине 4 миллион кĕренке бомба пăрахнă. Çав вăхăт хушшинчех тăшманăн 308 самолетне пĕтерсе тăкнă.

ДЕ ГОЛЛЬ АЛЖИРА КАЯССИНЕ ВĂХĂТЛĂХА ХĂВАРНĂ ПИРКИ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Генерал Эйзенхауэр ыйтнипе де Голль Алжира каяссине вăхăтлăха хăварни çинчен кĕрешекен Францин генеральнăй штабĕ пĕлтерÿ пичетленĕ. Вăл пĕлтерÿре «де Голль тата наци комитечĕ Алжира каяссине вăхăтлăха хăварнишĕн шеллеççĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕç паллă последствисемсĕр юлма пултараймасть» тенĕ. Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Эйзенхауэр çав хыпара тĕлĕнсе вуласа тухнă».

США çар министрĕ Стимсон çапла каланă: Эйзенхауэр тĕлĕнни «Французсен политикăллă çав группировки çапăçу хĕрсе пынă вăхăтра пыма кирлĕ маррине ăнланманнинчен килнĕ», тенĕ. Малалла Стимсон çапла каланă: «Тунисра пыракан çапăçăва татса париччен союзниксен пĕтĕм вăйне, вăл шутра французсен группировкисен вăйне те, вăрçă кризисне татса парасси çине хума кирлĕ пуриншĕн те паллă пулмалла».

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат Пертинакс статьине пичетленĕ. Статьяра Пертинакс çапла çырать: де Голль Алжира пырса çитнине пула халăх демонстрацийĕсем пуçланса кайнипе Жиро режимне хăрушлăх умне тăратма пултарнă пулĕччĕ, тет. Тунисри çапăçусем чи вăйлă тапхăра çитнĕ вăхăтра политикăллă çавăн пек йывăрлăхсем усăллă пулман пулĕччĕç. Анчах «Эйзенхауэр тунă утăм Алжирта деголлизм вăйлăн сарăлнине пĕлтернине асăрхаттарма тивĕçлĕ». Тунисри кампани вĕçленсен, çар енчен кирлĕ пулнă текен ăнлану хăй те улшăнмалла, тет Пертинакс. Халăх движенийĕ ун чухне сарăлса кайма пултарĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн Лондонри корреспонденчĕн шухăшĕпе, темиçе кун каярах Жиро, Катру генералпа пыракан калаçăва татса, часах Габеса тухса кайни питĕ паллă пулса тăрать, вăл унта Габес хулин мэрĕ хăй кĕрешекен Францие пăхăнса тăни çинчен де Голле пĕлтернĕ хыççăнах тухса кайнă. Калаçăва татма çителĕклĕ çар составĕсем пулма пултараççĕ-и тен. Жиро çар событийĕсенчен ытларах политикăллă событисемпе интересленни те пулма пултарать, тет корреспондент.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

13. Мускавшăн!

Кĕрхи тĕксĕм кунсем.
  Ишнĕ, ишĕлнĕ сасă.
Çăмăр мар ку çăвать,
  тĕшĕрет çĕршыва.
Ку вăл вут та тăхлан,
  пĕр самант чарăнмасăр,
Талăк-талăкĕпе
  юнпа хутăш çăвать.

Умлăн-хыçлăн снаряд
  ÿксе çурăлнăçемĕн
Ахлатса аманать
  тăван çĕрĕн кăкри.
Аçта пăхнă, унта
  тÿрленми сурансем пек
Шăтăксем хуралаç.
  Çĕр суранĕ вĕри.

Кассăн-кассăн вара
  чăн-чăн çăмăр килсессĕн,
Тăван çĕр асапа
  тÿперен курнипе,
Ĕмĕрхи çуттĕнче,
  мăшкăла тÿсеймесĕр,
Туйăнать ачаллах
  кÿтсе макăрнă пек.

Çут тĕнче макăрать.
  Анчах халăх куççулĕ
Ĕнтĕ пулнă типсе
  тахçанах вутлă тар.
Тахçанах ун чĕри
  пулнă çирĕп вут чулĕ.
Ун пĕр ĕмĕт кăна:
  — Тăшмана аркатар!

Тăшмана аркатар!
  Выçă куç — урнă нимĕç,
Чыхăнса, антăхса
  хăйĕн юнĕпеле,
Малаллах талпăнать,
  ывтăнать вута хирĕç,
Юн хăссах ывтăнать
  вăл Мускав çинелле.

Броньăланă çамка,
  чи усал тискер кайăк, —
Ун пек ĕмĕтсĕре
  çуратман çут тĕнче.
Çав хăрушă çĕлен
  малалла шунă майăн
Юнлă, пылчăклă йĕр
  сĕтĕрнет хыçĕнчен.

Чармалла тискере!
  Çапăр сулăмлăн хирĕç! —
Асатте-аттесен
  аслă çĕрĕ чĕнет.
Хуçмалла нимĕçе!
  Нихăçан ирсĕр нимĕç
Ан сĕмлентĕр кĕмешкĕн
  çĕршыв чĕрине.

Çĕршыв ывăлĕсем
  кăкăрпа кар тăраççĕ.
Вил те тăр эс, ан чак,
  вырăнтан ан хускал!
Арăмсем, ачасем
  пире чун пек шанаççĕ,
Йĕкĕтсемĕр, хыçра
  пирĕн пурнăç — Мускав.

Ахăрать, пăтранать
  лăпланми вăрçă вучĕ,
Хыпса илнĕ çав вут
  пĕтĕм çĕр чăмăрне.
Тÿсеймест çав вутра
  нимĕнле тимĕр-хурçă,
Тимĕр кăвăрчă пек
  вĕтĕнсе пĕтĕрнет.

Вăрçă вучĕ хаяр.
  Çапăçу уйĕ-хирĕ
Тутăх-çунăк танксен
  купипе витĕнет.
Этем çеç-мĕн тÿсет.
  Хурçăран та вăл çирĕп.
Нимĕнле хаяр вут
  витеймест этеме.

Ку вăл пирĕн этем,
  пирĕн улăп пек воин,
Вăл хăюллăн тухать
  танка хирĕç пĕччен.
Вĕçĕ çук, виçи çук
  унăн вилĕмсĕр вăйĕн,
Çапăçать вăл тăрса
  юлашки сывлăшчен.

Витĕр пуля тухать.
  Вăл çапах та пĕр хушă
Ÿкеймесĕр тăрать
  е чупать малалла.
Ураран ÿкиччен
  вăл тăшманшăн хăрушă,
Вăл асамлă вăй пек
  тăшмана хăвалать.

Вырăс çынĕ çинчен
  авалах-çке каланă:
Ураран ÿкиччен,
  вăл вилсен те вилмен
Эпир тухнă вăрçа
  вырăспа пĕр тăванăн
Эпир тухнă вăрçа
  вилме мар, çĕнтерме.

Тăшман вилĕм курать.
  Çавăнпа та урсах вăл
Аркатма талпăнать
  пирĕн аслă çара.
Пур çаратнă танкран
  пуçтарса хурçă савăл
Тăшман пирĕн çине
  умлăн-хыçлăн ярать.

Ав килет аллă танк.
  Çирĕм сакăр гвардеец
Çав тискер кĕтĕве
  хирĕç тăчĕç карах.
— Тăван çĕршĕн, ачсем,
  çирĕп тăрăпăр, терĕç,
Пирĕн урлă каçаймĕ
  фашист—вăр-хурах!

Диев тăчĕ кунта.
  Хурçă пек çирĕп саслăн
Вăл каларĕ çапла
  танксем килнĕ чух:
— Тăвансем те туссем,
  Российăмăр аслă,
Анчах пирĕн чакма
  хыçра урăх çĕр çук!

Чакма урăх çĕр çук!
  Ĕмĕр юлĕ çак сасă.
Илтсе тăрĕç ăна
  халăхсем пиншер çул.
Ак пуçланчĕ вара
  чĕп-чĕр юнлă та харсăр,
Тĕнче ĕмĕр курман
  тытăçу.

(Малалли пулать).

(Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетленме пуçланă.)

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1022 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.